Пĕтĕм Раççейри ирĕклĕ пушар хуралĕ паянхи çĕнĕлĕхсенче

# Пахалăх тарăнрах тымар ятăр

***Çапла пĕтĕмлетрĕ пирĕн калаçăва Пĕтĕм Раççейри ирĕклĕ пушар хуралĕн районти уйрăмĕн ертӳçи В. И. ЯНДУШКИН. Пĕтĕм Раççейри ирĕклĕ пушар хуралĕ. Мĕнпе пулăшайрать-ха вăл ял çыннисене, мĕнле тĕрев парайрать вăл район экономикине? ВДПО тесен çак ыйтăва час-часах илтме пулать. Пирĕн паянхи калаçу çак тата ытти хăш-пĕр ыйтусем çине хурав парасса шанатпăр.***

**– Валерий Иванович, унччен районта ВДПОн мастер участокĕ çеçчĕ. Халĕ – районти уйрăм. Çак улшăну районти пушар хуралне тата пушар хăрушсăрлăхне çĕнетӳсем илсе килчĕ-и?**

– Кунта пĕр хурав çеç: çĕршыври кунсерен улшăнакан пурнăç, вăй илсе пыракан наци проекчĕсем, республикăпа районăмăрăн малтуртăмлă аталанăвĕ те хăрушсăрлăх ыйтаççĕ. Кунта Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров кăçал пушар хуралĕнче вăй хуракансен профессиллĕ кунĕнче районсенчи патшалăх пушар надзорĕн уйрăмĕсене çăмăл автомашинăсем панă чух каланă сăмах чĕлхе çинчен каймасть. “Пушар патĕнче сӳнтерме мар, вăл тухиччен пулмалла, ăнлантарупа пулăшу ĕçне маларах ответлăха туйса туни общество ĕçне сыхлать, малалла аталанма çул уçать”, – çапла пĕтĕмлетрĕ вăл хăйĕн сăмахне. Каларĕ те пирĕн ĕçри çĕнĕлĕхсене пуçларĕ. Кăçалччен районти мастер участокĕ ялсенче çут çанталăк газĕ кĕртнĕ çĕрте мăрьесем тĕрĕслесе акт парассипе нумай ĕçсем пурнăçларĕ. Кунта Н. Сидоров мастер тăрăшулăхĕ нумай инкеке вĕсен пуçламăшĕнчех çăварлăхларĕ тесе шутлатăп. Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, кунсерен улшăнать, çĕнĕлĕхсем илсе килет. Пушар хуралĕ те унран айккинче юлаймастех. Акă района газификацилес ĕç уйрăм килсем тĕлĕшпе çеç юлчĕ, апла пулсан малалла вĕсене пăхса тăрассине тĕрĕслеме пуçламалла пулать. Хуçалăхсенчи пушар машинисем кивелсе юрăхсăра тухса пыраççĕ. Кирлĕ вăхăтра пулăшма çитнĕ пĕр машини те пысăк тĕкĕ. Çакна район çыннисем те кураççĕ, ыйтусем параççĕ.

Сирĕн ыйту çине хуравласа çакна та калатăп. Унччен республикăри ВДПО чикĕллĕ яваплăхлă общество пулнă пулсан, 2005 çулта вăл реорганизаци чăтса ирттерчĕ, республикăмăрти уйрăм пулса тăчĕ, пушар хăрушсăрлăх профилактики çине тимлĕрех пăхма пуçларĕ, ял çыннисем патне çывăхарах пычĕ. Çакăнта ăна 22 çул ертсе пыракан С. Сергеевăн ĕç опычĕ пысăкки те курăмлă вырăн йышăнать. Пирĕн системăри çĕн йĕркелӳ района та çитрĕ. Унччен пĕр çын ĕçленĕ вырăнта иккĕн ĕçлеме пуçларăмăр. Каласа хăвармалла, 30-35 çул каялла пирĕн организацире 11 çын таран та пулнă. Вĕсем ун чух ялсем тăрăх кăмакасемпе мăрьесем тĕрĕслесех çӳренĕ. Ку объектсем паян та час-часах пушар сăлтавĕсем пулса тăраççĕ. Кăмака-мăрье тата электрохуçалăх юсавсăррине пула кăна кăçал районта 15 пушар пулчĕ.

**– Апла пулсан сирĕн ĕç фрончĕ пур. Мĕн планлатăрха çывăх малашлăхра? Мĕн тума ĕлкĕртĕр хăвăр ĕçлеме пуçланăранпа?**

– Мĕр пур ĕçе пĕр кунра татса пама май çук. Районта пирĕн ĕç тĕлĕшĕпе уксахлакан тĕслĕхсем самай. Вĕсене пĕтерме, пушар хăрушсăрлăхĕпе ял çыннисен ыйтăвĕсене татса памалли тĕллевсем пĕрре мар. Вĕсене пĕрле пулсан çеç сирме пулать. Акă иртнĕ кунсенче 6-7 çул Юнкăпуçĕнче унченхи “Новая Юнга” хуçалăхăн харпăрлăхĕнче пулнă, кооператив рынок хутшăнăвĕнче авăра путнă хыççăн хуçасăр ларнă пушар машинине складран кăлартăмăр, ăна юсас ĕçе кӳлĕнтĕмĕр. Вăл ĕçе хатĕрленсе çитсен унăн пĕлтерĕшĕ Юнкăсемпе Чемейсемшĕн тата Нискасси тăрăхĕшĕн питех те вырăнлă пулĕ. Плансем тенĕрен, эпир ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе, хуçалăх ертӳçисемпе пĕр чĕлхе тупсан районта 1-2 пушар машини тытма та хатĕр.

Юлашки çулсенче Раççейре социаллă культура çурчĕсенче пушарсем тухни çак объектсенче пушар хурал сигнализацийĕ лартас ыйтăва мала кăларчĕ. Кунта малти вырăнта шкулсемпе ача сачĕсем, фельдшер пункчĕсемпе магазинсем тăраççĕ. Шăпах унта-çке халăх йышлă пухăнать.

Электропроводкăсен сопротивленине виçесси уйрăм ыйту. Кунта та эпир алă усса лармастпăр. Шкулсем ку ыйтупа çанă тавăрсах ĕçлерĕç пулсан, обществăлла выльăхчĕрлĕх фермисем хĕле кĕме хатĕрленнине пăхмасăрах хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсем ку ыйту çине алă сулаççĕ. Ку ыйтупа ял тăрăхĕсен те ĕçлемелле, ял çыннисен электрохуçалăхĕсене кая юлмасăр тĕрĕслеме тăрăшмалла. Ахальлĕн чавса çывăх та çыртма çук пулса тухать. Çав вăхăтрах Мăн Сĕнтĕр, Хорнуй, Ильинка, Чуманкасси ял тăрăхĕсенче тĕрĕслеттернĕ тĕслĕхсем пулчĕç те.

Тепĕр пирĕн ĕç вăл – шкулсемпе ача сачĕсенче тата ялсенче пушарпа кĕрешессипе пропагандăпа агитаци ĕçĕ тăвасси, çак ĕçĕн культурине сарасси-ӳстересси. Çакăнта шкулсен дирекцийĕсем, ача сачĕсен ертӳçисем, хуçалăх руководителĕсемпе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пирĕнпе çыхăнсарах ĕçлессе шанас килет. Иртен пуçласа каçчен вăй хурса тунă пурлăха çулăма парса кĕл çинче тăрса юлас марччĕ.



**– Ял çыннисен мĕнле ыйтăвĕсене эсир кая юлмасăр тивĕçтерме пултаратăр?**

– Питĕ вырăнлă ыйту. Кунта манăн каллех ЧР Президенчĕн сăмахĕсем çинче чарăнса тăрас килет. “Эпир производствăна аталантарнине, мĕн туса илнине упрама пĕлмесен, “хĕрлĕ автана” парса кĕл туса вĕçтерсен, пире нимĕнле наци проекчĕ те çутă малашлăха илсе çитереймĕ, хамăр ачамăрсем валли те ытлă-çитлĕ пурнăç туса пама пулăшаймĕ”, –терĕ вăл паянхи интервью пуçламăшĕнче асăннă тĕл пулура. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсене хăйсем кунĕн-çĕрĕн вăй хунин çимĕçне пулас ăрусем валли сыхласа хăварма эпир электромонтаж ĕçĕсем тума, çуртсен йывăç пайĕсене çулăмран сыхламалли шĕвекпе тирпейлеме, лицензисем илме пушар хăрушсăрлăхĕпе вĕрентме, огнетушительсемпе, пушар пусмисемпе, светильниксемпе, агитаци материалĕсемпе т. ыт. те тивĕçтерме пултаратпăр. Пирĕн ĕç вырăнĕ Муркашра 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕнче вырнаçнă. Килĕр! Сирĕн ыйтăвăрсене тивĕçтерме эпир яланах хавас.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: районти ВДПО уйрăмĕн председателĕ В. Яндушкин “Алый парус” лагерĕн тĕп врачĕн çумĕпе В. Акимовапа ăнлантару калаçăвĕ ирттернĕ самант.**

Фермăсене хĕле хатĕрленине тĕрĕслетпĕр

# Сĕт хакĕ ӳсрĕ, аш хакланать...



**Ку электрохуçалăх – хĕллехи пушар хăрушлăх çăлкуçĕсенчен пĕри.**

Рынок экономикинче выльăх-чĕрлĕх продукцине ыйтасси палăрмаллах ӳсрĕ пулсан, хăшĕсем çакна е курмаççĕ, е шаннă ĕçе аларан кайтăр тесе пурнăçлаççĕ. Ыйтуллă юлашки сăмахсем К. Иванов ячĕллĕ ял хуçалăх производство кооперативĕн фермисене çитсен курăнчĕ. Чи малтанах çакна каламалла. Хуçалăх хăйĕн сысна фермине мал туртăмлă çынна хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркелеме килĕшӳ туса панă пулсан, сĕт продукцийĕ куллен ӳснĕ вăхăтра, çĕршывра ял хуçалăхне аталантарассипе наци проекчĕ ĕçленĕ тапхăрта, сĕт ферми хĕл умĕн çакнашкал юхăнчăк курăнни нумай ыйтусем çуратрĕ.

13 сехет. Сĕт ферминче пире пĕтĕм уçă алăкпа 4 кушак çури тата çулсем иртнипе чалăшкаланă йывăç сарай умĕнчи 15 çамрăк пăрушка кăна кĕтсе илчĕç. Уяр та ăшă çанталăкра сарайсенче хĕле хатĕрленсе пăта çапакана та, хурал тавраш не те курмарăмăр.

Хуçалăх ертӳçин ĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Р. Грачев кантуртах хĕле хатĕрленессипе ĕçсем вырăнтан тапранманни çинчен пĕлтерни вырăнта уççăнах курăнчĕ. Умра хура кĕркунне пулсан, тепĕр уйăхран хатĕрленӳ ĕçĕсене вĕçлетпĕр тени вара мал туртăмлă илтĕнет-и сире? Пире – çук. 166 пуç мăйракаллă шултра выльăха хĕл каçарма (вăл шутра 89 пуç сумалли ĕне) 100 тонна утă, 1500 тонна сенаж, 70-80 тонна улăм, 100 тонна фуражлăх тырă хатĕрлени кăна хĕле тухăçлă ирттерме çул уçмастех. Çум айне пулнă ферма тăврашĕ, ишĕлекен стенасем, йăтăнса аннă алăксем, ирпе сунă 200 литр сĕт шăна апачĕ пулни, юхăнса кайнă пушар хăрушсăрлăхĕ т. ыт. те мал туртăмлă хресчен ĕçĕ марах.



**Çум тата çумăр айĕнче выртса чӳрече рами çĕрмен-ши?**



**Инкек хăрушлăхĕ пуриншĕн те паллă, анчах алă çитмест...е...**

К. Иванов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн фермисенче хĕле хатĕрленессипе ыйтусем кăна пулсан, чикĕри вăрман тăрăхĕ витĕр тухсан кӳршĕллĕ “Герой” хуçалăх хĕле хатĕрри çын каламасăрах курăнать: симĕс калчаллă çумсăр уйсем, катаранах таса курăнакан сарайсем, фермăсем патне симĕс масса тиенĕ машинăсем рейс хыççăн рейс туни, фермăсенче ĕçлекенсем те, специалистсем те пулни Шурча тăрăхĕнче çĕнĕлĕх мар. Пĕрлехи тимлĕхпе хуçалăх паян пĕр ĕне пуçне 10,6 килограмм сĕт сăвать. Кунта хĕл кунĕсенче те продуктивлăх пуласси пирки иккĕленӳ çук.



**Ишĕлекен стена нумайччен тытăнса тăрĕ-ши?**



**Таврана юр хупласан хĕлле карта мĕн тума кирлĕ?**

**Рейд бригади:**

**Н. ЯКОВЛЕВ, районти тĕп патшалăх ветеринари инспекторĕ;**

**А. ЕФИМОВ, районти патшалăх пушар надзорĕн аслă инспекторĕ;**

**А. БЕЛОВ, район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.**

Пирĕн пата çыраççĕ

# Ырă чунлăх ан иксĕлтĕр

Çул хыççăн çул иртет, çамрăклăх хăвăрт иртет, çулсем иртнĕçемĕн ватлăх кунĕсем те алăкран шаккаççĕ. Çак вăхăтра аслă ăрури çынсене уйрăмах тимлĕх нумай кирлĕ. Çакна асра тытакансем пирки ватта сума сăвакан хăй те сумлă пулакан тесе тĕрĕс калани пирки никамăн та иккĕленӳ çук.

Йӳçкасси ял тăрăхĕнче ватă çынсене хисеплесе уявсем ирттересси ырă йăлара. Юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче кăçал та аслă ăрури çынсем ЧР Президенчĕн саламлă открыткисене илчĕç, савăк туйăмпа Йӳçкассинчи Культура çуртне пухăнчĕç. Ĕçре пиçĕхнĕ ватăсене çак кун “Ударник” хуçалăх ертӳçи П. Давыдов, Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Иванов, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ А. Кузьмин, “Ударник” хуçалăхри ваттисен канашĕн ертӳçи З. Кутузов саламларĕç.

Платон Павлович пухăннă ватăсене вĕсем хуçалăха тĕреклетес ĕçре малтисен ретĕнче пулнине, иртен пуçласа каçчен хуçалăх хирĕсенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче малтуртăмлă ĕçленине палăртрĕ, çакăншăн тав турĕ, канлĕ ватлăх та çирĕп сывлăх сунчĕ, хуçалăхра ĕçленĕ тата 70 çултан иртнĕ ватăсене 100-шер килограмм, ĕç ветеранĕ ята илнисене 300-шер килограмм тырă укçасăрах валеçме алă пусрĕ.

Р. Михайлова врач ватăсен сывлăхĕ пирки малашне те тăрăшса ĕçлесси пирки пĕлтерни ватăсенче ырă шанăç çуратрĕ.

Йӳçкассинчи ватă çынсен çуртне районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н. Петровапа РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳçи Е. Александрова та килсе ăшшăн саламларĕç.

**Е. ЗАХАРОВА,**
**Панкли ял библиотекин заведующийĕ.**